Шупашкар район хаҫачӗ ❋ 1932 ҫулхи июлӗн 27-мӗшӗнче тухма пуҫланӑ

# ТĂВАН ЕН

122 (8959) № ❋ 2004 ҫулхи октябрӗн (юпа уйӑхӗн) 20-мӗшӗ. Юн кун ❋ Хакӗ ирӗклӗ

❂ Республика хыпарӗсем

## ҪЫХӐНУСЕМ ЛАЙӐХЛАНАҪҪӖ

Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн Председателӗ С.Гапликов ертсе пыракан официаллӑ делегаци Итали Республикин Пьемонт облаҫӗнчи Турин хулинче ЧР Правительствипе Пьемонт облаҫӗн Администрацийӗ пӗр-пӗрне ӑнланса ӗҫлесси ҫинчен калакан Протокола алӑ пуснӑ.

Документа Чӑваш Республикипе Пьемонт облаҫӗ агропромышленность комплексӗнче, суту-илӳре, технологисен сферинче, професси пӗлӗвӗ парас енӗпе ӗҫлӗ ҫыхӑнусене ҫирӗплетес, аталантарас, килӗштерсе ӗҫлес тӗллевпе йышӑннӑ.

## ПЫСӐК ПӖЛТЕРӖШЛӖ ЫЙТУСЕМПЕ

Республика Президенчӗн Администрацийӗн пресс-служби пӗлтернӗ тӑрӑх, октябрӗн 18-мӗшӗнче Н.Федоров Президент ЧР Министрсен Кабинечӗн членӗсемпе ҫивӗч ыйтусем тавра ӗҫлӗ канашлу ирттернӗ. Унта республикӑра хутмалли тапхӑр мӗнле пуҫланнине, газ кӗртесси еплерех пынине, уй-хирти кӗрхи ӗҫсене тишкернӗ.

ЧР строительство, архитектура, пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх министрӗ В.Филатов хӗле хатӗрленес енӗпе мӗнпур ыйтӑва тӗпрен илсен татса пани ҫинчен каланӑ. Хӑш-пӗр кӑлтӑк кӑна юлнӑ. Министр вӗсене ҫак кунсенчех татса пама шантарнӑ.

Строительство министерствин прогнозӗ тӑрӑх, ҫулталӑк вӗҫленнӗ тӗле 1598 ялта газ пулать, ку вӑл палӑртнӑ кӑтартуран 98 процент чухлӗ. Хӑш-пӗр районта газификаци шайӗ 100 процента ҫитнӗ. Финанс политикине ҫирӗп тытса пынипе республикӑри 10 пин ҫемье ытла пӗтӗмпе 184 миллион тенкӗлӗх кредит пулӑшӑвӗ илнӗ.

Уй-хир ӗҫӗсен тӑрӑмӗпе вице-премьер, ял хуҫалӑх министрӗ М.Игнатьев паллаштарнӑ. Тӗш тырӑпа пӑрҫа йышши культурӑсен тухӑҫӗ пӗлтӗрхи шайран кӑшт сахалрах, анчах тулӑ пахалӑхӗ лайӑхланнӑ. Хальхи тапхӑрта ял ҫынисем сахӑр кӑшманӗ кӑлараҫҫӗ (60 процентне кӑларнӑ), пахча-ҫимӗҫ (акнӑ лаптӑкран 81 процентне пуҫтарнӑ), выльӑх кӑшманӗ (89 процент) пухаҫҫӗ.

**Г.ЕГОРОВ хатӗрленӗ.**

## ВӖРЕНТӲ ПАХАЛӐХНЕ ЛАЙӐХЛАТМА - ҪӖНӖ ОБОРУДОВАНИ

**Юлашки ҫулсенче вӗрентӗве модернизацилес тӗллевпе йышӑннӑ программӑсемпе килӗшӳллӗн республикӑри вун-вун шкул пурлӑхпа техника никӗсне ҫирӗплетме пултарчӗ. Вӗрентӳ тытӑмӗн реформин проекчӗ тӑрӑх ял шкулӗсене реструктуризацилес ӗҫ малалла пырать. Нумаях пулмасть республикӑри 27 базӑллӑ шкула 22 миллион тенкӗлӗх ҫӗнӗ йышши оборудовани илсе килнӗ. Вӗсен шутне пирӗн районти Тренккассинчи пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан ӳнерпе илемлӗх тата спорт предмечӗсене тарӑнрах вӗрентекен вӑтам шкул та кӗнӗ, 815 пин тенкӗлӗх ҫӗнӗ оборудованиллӗ пулнӑ. Ытахальтен мар тивӗҫнӗ вӑл ҫак хисепе.**



- Вӗрентӳ пахалӑхне лайӑхлатма пулӑшакан ҫӗнӗ йышши техникӑна ЧР Вӗрентӳ министерстви шӑпах пирӗн шкула шанса пани пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Ачасен аталанӑвне ӳстерес енӗпе шанӑҫа тӳрре кӑларма май ҫитернишӗн савӑнатпӑр. Малашлӑхра вара - мӗн пуррине ӗҫ планне кӗртсе тӗллевлӗ те эффективлӑ усӑ курассине тӗпе хурса тӑрӑшасчӗ,- палӑртрӗ шкул директорӗ В.Г.Фомин.

Ҫапла пулӗ те. Кунта ачасене ҫирӗп пӗлӳ, тивӗҫлӗ воспитани парассишӗн ҫунакан маттур та пултаруллӑ педагогсем вӑй хураҫҫӗ. Хӗрӗх ҫичӗ вӗрентекенрен ҫиччӗшӗ - аслӑ, ҫирӗм пӗррешӗ - пӗрремӗш, вун саккӑрӑшӗ - иккӗмӗш категориллӗ, иккӗшӗ - ЧР хисеплӗ вӗрентекенӗ, ҫиччӗшӗ - РФ халӑха вӗрентес ӗҫ отличникӗ ята тивӗҫнисем. Районта ирттерекен тӗрлӗ конкурссенче те вӗсен хушамачӗсем кашнинчех призерсен йышӗнче. Вӗренекенӗсем ҫулсерен районти, республикӑри мероприятисене, олимпиадӑсене хастар хутшӑнса яланах малти вырӑнсене йышӑнаҫҫӗ, шкул чысне ҫӳллӗ шайра тытса пыраҫҫӗ. Ҫакӑ педагогсен ӗҫне лайӑх енчен хак паракан, ырӑ сӑмаха тивӗҫтерекен курӑм мар-и?

Вӗрентӳри ҫӗнӗлӗхсем шкул пурнӑҫне ҫӑмӑллӑнах кӗрсе пыраҫҫӗ, ӳсӗмӗсем те курӑмлӑ. Патшалӑхӑн пӗрлехи экзаменӗпе районта пӗрремӗш, иккӗмӗш вырӑнсенчен кая чакмаҫҫӗ. Раҫҫейӗн тӗрлӗ кӗтесӗсенчи аслӑ вӗренӳ заведенийӗсенче пӗлӗве малалла аталантарасси ҫулсерен ӳссе пырать. Пӗлтӗртен тепӗр эксперимента - тӑххӑрмӗш класран пуҫласа профильлӗ майпа вӗрентессине виҫӗ направленипе - технологи, математика, гуманитари енӗпе - пуҫӑнчӗҫ. Палӑртма кӑмӑллӑ, кӑтартусем лайӑххине сунаҫҫӗ.

- Шкулсене пурлӑхпа техника базине «пуянлатни» ырӑ пулӑм. Анчах та хальлӗхе вӗсене йышӑнма эпир тӗплӗн хатӗрленсе ҫитейменни пӑшӑрхантарать: пӳлӗмсене юсаса ҫӗнетмелле, хаклӑ пурлӑха сыхлама хуралҫӑна ҫеҫ шанни ҫителӗксӗр,- чунне уҫрӗ Викентий Геннадьевич Фомин.

**И.ВАСИЛЬЕВА.**



Г.СЕМЕНОВ фото ӳкерчӗкӗсем.

**❂ Ҫӗнӗ оборудовани комплекчӗ хӑйӗн пӳлӗмне кӗтет.**
**❂ Шкул директорӗ В.Фомин урок вӗхӑтӗнче.**

## МАЛТАНАХ СЫХЛАННИ - СИПЛЕННИНЧЕН НУМАЙ ХУТ ЙӲНӖРЕХ

**Кашни ҫулах хӗл пуҫламӑшӗнче пирӗн сывлӑха грипп чирӗ килсе тӗрӗслет. Ҫавӑнпа та ӑна яланах хатӗрленсе тивӗҫлипе кӗтсе илмелле. Хӑш-пӗр ыйтусем ҫине районти тӗп врач В.В.РАФИНОВ хуравлать.**

**- Вячеслав Викторович, грипп чирне пӗлетпӗр тетпӗр, апла пулсан мӗншӗн-ха эпир унран малтанах хӑратпӑр?**

- Грипп чирӗ вӑл хӑйне май вӑрттӑн чир. Вӑл кашни ҫулах урӑхларах пулма пултарать. Иртнӗ 4-5 ҫул вӑл пирӗн ҫӑмӑлраххӑн иртрӗ пулсан, кӑҫалхи йывӑртарах пулма пултарать. Ҫавӑнпа та чи малтанах пирӗн сывӑ пурнӑҫ йӗркине ҫирӗп тытса пымалла. Физкультурӑпа спорт, лайӑх пахалӑхлӑ, витаминлӑ апат-ҫимӗҫ, тасалӑх тата ытти те. Ҫакна та каласа хӑвармалла, грипп чирӗ ҫулсеренех пирӗн республикӑна 500 миллион тенкӗлӗх тӑкак кӳрет. Ҫавӑнпа та унпа чирленинчен, унран малтанах сыхланасси нумай йӳнӗрех. Уйрӑмах вӑл тепӗр хут ҫӗнелсе кайнипе е вӗрӗлнипе хӑрушӑ. Тепӗр хут ҫӗнелсе кайсан сывламалли, шӑк ҫулӗсене, чӗрене, тӗп нерв системине сусӑрлатса хӑварма пултарать.

**- Иртнӗ ҫулсенче гриппран сыхланса тухтӑрсем прививка тӑвасҫӗччӗ е сӑмсаран эмел яраҫҫӗччӗ. Кӑҫал ҫак процедура еплерех иртӗ?**

- Каларӑмӑр ӗнтӗ, кӑҫалхи эпидемиччи сулхисенчен кӑшт вӑйларах пулма пултарать. Ҫавӑнпа та пирӗн ӑна кӗтсе илме хатӗрех пулмалла. Грипп ҫитиччен прививка икӗ эрне маларах тумалла. Сӑмах май каласан, кӑҫал вӑл ноябрӗн иккӗмӗш ҫуррипе декабрь уйӑхӗсенче пулмалла. Ҫавӑнпа та халӗ унран сыхланас мероприятисене пуҫламалла ӗнтӗ.

Привикӑсем тума район бюджетӗнчен 120 пин тенкӗ уйӑрнӑ, анчах та вӑл ытларах шкул ачисем валли. Ӗҫлекен ҫынсен вара хӑйсен укҫипе е организаци, предприяти пулӑшӑвӗпе тумалла. Пӗр укол тума 95 тенкӗ пулать, ку ҫителӗклех.

**- Апат рационӗнче мӗнле ҫимӗҫпе ытларах усӑ курмалла?**

- Малтанах ҫакна каламалла. Ҫын чирлерӗ пулсан унӑн туха ҫӳремелле мар, унсӑрӑн ыттисене ертме пултарать. Организма лайӑх кантармалла. Чир пуҫланиччен хура хурлӑхан, мӑк ҫырли, сухан, ыхра, купӑста чӗрӗлле ҫимелле. Шыв нумай ӗҫмелле. Хавшак организма грипп та ҫӑмӑллӑнах парӑнтарать.

**- Вячеслав Викторович, прививка тутарас текенсен ӑҫта каймалла-ха?**

- Больницӑри хӑвӑрӑн участокри терапевт, педиатр патне пымалла е тӗп больницӑри поликлиникӑри 38-мӗш пӳлӗме кӗмелле.

**П.ПАВЛОВ.**

## ВЫЛЬӐХ-ЧӖРЛӖХҪӖСЕМ ӖҪЕ ПӖТӖМЛЕТРӖҪ

Выльӑх-чӗрлӗх отраслӗн ӗҫченӗсем иртнӗ эрнере хӑйсен ӗҫне пӗтӗмлетрӗҫ. Мӗнлерех хаклама пулать-ха ӑна? Лайӑххи те пур, начарри те. Ашкакай туса илессипе кӑтартӑва 6 процент ӳстерме пултарнӑ. Ҫӑмартапа та кӑҫалхи тӑхӑр уйӑхра ӑнӑҫлӑ ӗҫленӗ. Отраслӗн аталанӑвӗ пирки ял хуҫалӑхӗпе апат-ҫимӗҫ управленийӗн тӗп зоотехникӗ С.Н.Мясникова доклад турӗ. Вӑл хуҫалӑхсем хӗллехи тапхӑра мӗнлерех кӗтсе илнине те тишкерчӗ.

Канашлура ытти ыйтусене те пӑхса тухрӗҫ. Ӗҫ тата пушар хӑрушсӑрлӑхне пӑхӑнасси пирки те, ҫуркунне хуҫалӑхсене панӑ бюджет ссудипе татӑласси тата ялӑн социаллӑ аталанӑвӗ ҫинчен калакан программа епле пурнӑҫланни ҫинчен те сӑмах хускатрӗҫ.

Ял хуҫалӑх ертӳҫисемпе тата тӗп зооветспециалистсемпе ирттернӗ канашлӑва район ертӳҫи А.П.Князев ертсе пычӗ. Тӗплӗнрех - ҫитес номерте.

**В.ИВАНОВА.**

## ОТЧЕТ ТЕНИ ПУРИНШӖН

Ҫапларах чӗнсе калаҫҫӗ районти фермер хуҫалӑхӗсене. Ҫӗр ҫинче хӑйсем тӗллӗн ӗҫлесе пӑхас шутпа йӗркеленнисем пирӗн районта халӗ 252-ӗн шутланаҫҫӗ, 1311 гектар лаптӑк йышӑнаҫҫӗ.

Фермер пулма шут тытнӑ ҫав хастарсем хӑйсен ӗҫне темшӗн кӑтартма васкамаҫҫӗ. Сӑмах - отчет парасси пирки. Халӗ, сӑмах май, ял хуҫалӑх ҫулне пӗтӗмлетекеннисене тӑратма вӑхӑт. Апла пулсан, ан ӳркенӗр, кирлӗ хутсене района ҫитерӗр.

**В.ТИТОВА.**

## ВӖҪЛЕННӖПЕ ПӖРЕХ

Район администрацийӗн пуҫлӑхӗн «2004-2005 ҫулсенчи кӗркуннехи-хӗллехи тапхӑрта пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе организацисене ӑшӑ парасси ҫинчен» йышӑнӑвӗпе килӗшӳллӗн котельнӑйсене вӑхӑтра ӑшӑ пама хатӗрлес ӗҫ пӗтӗмӗшле илсен вӗҫленнӗ темелле. «Сундырское» юсавпа техника предприяти балансӗ ҫинче шутланса тӑракан райцентрти Шоссейнӑй урамри тӑватӑ ҫурт, Тепличнӑй урамри промышленность предприятийӗсенче лару-тӑру паян-ыран йӗркеленмелле. Ҫавӑн пекех Тутаркассинчи участок больницинче строительство ӗҫӗсем пынӑ май иккӗмӗш хута ӑшӑ парасси тытӑнса тӑрать. Кӳкеҫри Советски урамри 17-мӗш ҫуртӑн ӑшӑ пӑрӑхӗсене проекта пӑхӑнмасӑр вырнаҫтарни унта пурӑнакансене сивӗре нушалантарать. Ку ыйтӑва ҫитес кунсенче татса пама шантараҫҫӗ.

**И.ВЛАДИМИРОВА.**

## МУСКАВӐН ЧӖРӖК ПАЙНЕ ПИРӖН РЕСПУБЛИКА ҪӖР УЛМИПЕ ТИВӖҪТЕРНӖ

ЧР Ял хуҫалӑх министерствипе Мускав хулин Апат-ҫимӗҫ ресурсӗсен департаменчӗ пӗлтӗрхи кӗркунне тунӑ килӗшӗве пурнӑҫланӑ. Пирӗн республикӑран ҫӗршывӑмӑрӑн тӗп хулине 7000 тонна ҫӗр улми ӑсатнӑ. Уйрӑмах пысӑк парти Комсомольски районӗнчи «Ҫӗр улмие мухтав» агрофирмӑран кайнӑ. Мускавсемпе «Таябинка», «Янгорчино» предприятисемпе пӗрлех Вӑрнар райповӗ те аван ӗҫленӗ.

Сӑмах май, 7000 тонна вӑл Мускав хулин заказӗн чӗрӗк пайӗ пулать.

**В.ЭВЕРККИ.**

## ЗАВОД ӖҪЕ ЙЫХРАВЛАТЬ

Хальхи вӑхӑтра ӗҫе йыхравлакан пӗлтерӳсене час-часах асӑрхама пулать. Предприятисенче ытларах рабочисене кӗтеҫҫӗ. «Шупашкарти агрегат завочӗ» акционерсен обществине те ҫынсем кирлӗ. Токарьсемпе фрезеровщиксенчен пуҫласа инженерсем таранах.

Ҫак тата ытти кирлӗ информацие пӗлме пулать асӑннӑ заводпа Халӑха ӗҫпе тивӗҫтерес енӗпе ӗҫлекен Шупашкарти центр ирттерекен ваканси ярмӑрккинче. Вӑл ыран тӗп хуламӑрти Мир проспекчӗнче, 1-мӗш ҫуртра пулӗ. Ярмӑркка 10 сехетре пуҫланмалла.

**В.АВЕРКИЕВА.**

**ХИСЕПЛӖ ВУЛАКАНСЕМ!**

2005 ҫулхи пӗрремӗш ҫур ҫул валли «Тӑван Ен» хаҫат ҫырӑнтарӑвӗ малалла пырать. Ӑна почтальонкӑсем те, почта уйрӑмӗсенче те, унсӑр пуҫне альтернативлӑ майпа хаҫат редакцийӗнче те ҫырӑнтараҫҫӗ. Хапӑл тӑватпӑр «Тӑван Ен» тусӗсен йышне!

❂ Призыв

# ЭСĔ ÇАР СЛУЖБИНЕ ЮРĂХЛĂ-И?

**Октябрĕн 1-мĕшĕнче çар комиссариачĕсенче кĕрхи призыв пуçланчĕ. Пирĕн районта ку енĕпе ĕçлекен А.Г.САЛМИН подполковник хăш-пĕр ыйтусене хуравлама кăмăл турĕ.**

**- Александр Григорьевич, малтанах, пĕр-ик сăмахпа, çурхи призыв çинчен каласамăрччĕ.**

- Лайăххах иртрĕ темелле. Хамăр ума лартнă тĕллеве пурнăçланă. Анчах, шел пулин те, çамрăксенчен çуррине яхăн сывлăх енчен çара юрăхсăр.

**- Мĕнле ăнланмалла-ха кăна?**

- Пирĕн районта çара юрăхлă призывниксем 52,7 процент çеç. Ку республикипе чи пĕчĕк кăтартусенчен пĕри. Кăнтăр енчи районсенче, сăмахран, сывлăхлисен процентĕ 80 процента та çитет.

**- Мĕн енчен хавшакрах вара паянхи çамрăксем?**

- Комисси палăртнă тăрăх, пĕрремĕш вырăнта шăмăпа мышца чирĕ тăрать. Унтан психика тата хырăмлăх енĕпе аптăраканнисем.

**- Кĕркуннехи призывра миçе çамрăк комисси витĕр тухмалла тата вĕсенчен, вăрттăнлăх мар пулсан, миçе ачана суйласа илмелле.**

- Тĕрĕслевре 615 ача пулмалла, вĕсенчен 90-шĕ çар ретне тăрĕ. Паянхи кун тĕлне 500 майлă çамрăк хăйĕн сывлăхне тĕрĕслеттернĕ ĕнтĕ.

**- Сывлăхĕ начаррисемсĕр пуçне тата гражданкăра юлакан ытти çамрăксем çар тумне тăхăнманнине мĕнле сăлтавламалла?**

- Килти лару-тăру мĕнлине кура тата вĕренекенсене вăхăтлăха хăваратпăр. Çакна та палăртмалла: кăçалхи призывниксем хăйсен тумне Канашрах улăштарăççĕ. Маларах тата вĕсем, çур çул служба çра пулнă хыççăн, йывăр лару-тăрулла вырăнсене лекме пултарнă, халĕ ун пек мар. Унта контрактпа килĕшÿ тунисем çеç пулаççĕ.

**- Вăрттăнлăх мар, теприсем çĕршыва сыхлас тивĕçрен пăрăнма тăрăшаççĕ. Ун пеккисем пур-и пирĕн районта?**

- Пĕр тĕслĕх пур. Халĕ вăл та ăнланчĕ: çак призывпа салтака кайма кăмăл турĕ. Унсăрăн саккунпа айăплама пулать.

**- Комисси районта çеç е вырăна туха та ĕçлет?**

- Нумаях пулмасть Ишекре, Ишлейре, Хыркассинче пултăмăр. Пирĕн тĕллев - çамрăксемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсене район центрне çÿреттерсе чăрмавран хăтарасси. Шел пулин те, çак тĕл пулусене нумай ашшĕ-амăшĕ çÿремест. Калаçмалли, ыйтса пĕлмелли сахал мар вĕт-ха. Кунта та планпа палăртнă тăрăх призывниксене чĕнетпĕр, калаçусем ирттеретпĕр.

**- Кĕрхи призывăн салтак юррине хăш кун илтĕпĕр?**

- Пĕрремĕш ăсану пирки ыйтатăр пулсан, вăл октябрĕн 25-мĕшĕнче иртет. Пулас салтаксем Атăлпа Урал çар округĕнче службăра тăрĕç.

**- Тавтапуç, Александр Григорьевич, калаçушăн. Ăнăçу сире.**

**П.ПАВЛОВ.**

❂ Экономика

# ПĔЛТĔРХИНЧЕН ЫТЛАРАХ

Çулталăк пуçланнăранпа районти социаллă-экономика кăтартăвĕ тăрăх промышленность производствин калăпăшĕ, ваккăн тăвакан суту-илÿ çаврăнăшĕн ÿсĕмĕн хăвăртлăхне палăртнă. Çакă бюджета налук ытларах хывма, ĕç укçине ÿстерме май панă.

Пысăк тата вăтам промышленность предприятийĕсен ĕç калăпăшĕ 141,9 миллион тенкĕпе танлашнă, иртнĕ çулхинчен 58,1 процент ÿснĕ. Ваккăн сутмалли тавар çаврăнăшĕн калăпăшĕ вĕсен 226,6 миллион тенкĕне çитнĕ, çакă пĕлтĕрхинчен 137,9 процент ытларах.

Хуçалăхсенче вылăх шучĕ чакни вара продукци туса илесси çине пысăк витĕм кÿнĕ. Чăх-чĕп отраслĕпе те лару-тăру тăвата фабрикинче тĕрлĕрен. Тăрăма лайăхлатас, ăратлăха çĕнетсе тухăçлăха ÿстерес тĕллевпе кăçал пурĕ 400 пин шултра çăмарта тата 31 пин те 200 штук талăкри ăратлă чĕпсем илсе килнĕ. Кайăк-кĕшĕк какайĕ илессипе «Чăваш бройлерĕ» АУО уйрăмах ăнăçлă ĕçлет, пĕтĕмĕшле продукцин 63,1 проценчĕ ăна тивет.

«ЧР ялсен социаллă аталанăвĕ» республикăн тĕллевлĕ программине пурнăçлас тĕлĕшпе уйăрнă укçа-тенкĕн 70 проценчĕпе усă курнă. Пурăнмалли çурт-йĕре хута ярасси, газификацилесси пĕлтĕрхи танлаштарулла тапхăрпа илсен ытларах пурнăçланнă.

**И.ВАСИЛЬЕВА.**

❂ Ĕççи - 2004

# СУХАЛАНИ АВАН ТА...

Кĕркунне сухаласа хăварнин усси пысăккине çĕр çынни аван ăнланать. Çапах та çак ĕçе çителĕклĕ пурнăçласси иккĕлентерет. Тĕп йывăрлăх - предприятисенче дизтопливо çукки. Ял хуçалăхĕпе апатçимĕç управленийĕн тĕп инженерĕ М.П.Александров пĕлтернĕ тăрăх, çак уйăхăн пуçламăшĕ тĕлне 93 тонна дизтопливо пулнă, 54 тонна - бензин. Çĕртме сухилĕх унăн саппасĕ Куйбышев ячĕллĕ кооперативра кăна-мĕн. Ыттисенче вăл е ку ĕçе тумалăх пĕчĕкшерĕн илсе тăраççĕ. Топливо проблеми çумне техника ыйтăвĕ хушăнать тата. Хуçалăхсенче пурĕ 151 плуг пур, анчах кадрсем çитменни сисĕнет. Механизаторсем гусеницăллă трактор çине ларасшăн мар. Ун йышшисем валли çын тупма йывăр.

«Кашни кун вăтамран 150-200 гектар сухалаççĕ,- тет управленин тĕп агрономĕ А.В.Краснов. - Çанталăк хитре пулсан майĕпен ĕç пырать». Август уйăхĕнче сухаланине нимĕн те çитмест теççĕ пулин те, çĕр шăнтиччен сухалама сĕнет районăн тĕп агрономĕ. Плугпа мар пулсан та, тăпран çиелти сийне сухаласа хăварсан та аван. Кĕрхи çĕртме пирки пуç ватнипе пĕрлех, паллах, экономика тĕлĕшĕнчен мĕн тусан усăллăраххи пирки те шухăшласа пăхмалла. «Сад», «Атлашевский» хуçалăхсенче, ав, комбинированнăй агрегатсем пур та, пĕр тăкакпах çĕре те хатĕрлеççĕ, акса та хăвараççĕ. Урăх регионсенче тăпран çиелти сийне хатĕрлесе акассипе ĕçлеççĕ. Ун пек чух, паллах, çум курăкран гербицид сапмалла.

Пурнăç йăлтах тенĕ пек укçа çинче тăнă самантра перекетлĕх пирки те манмалла маррине шута илсен çÿлерех асăннисен ырă опычĕпе усă курма тăрăшмаллах. Тăкаксене чакарма май паракан техникăна туянма пултарсан лайăх пулмалла та... Тен, лизингпа усă курса туянмалла?..

**В.ИВАНОВА.**



**Кадыков ячĕллĕ ял хуçалăх производство кооперативĕнче купăста анисем çинче хĕрÿ ĕç пырать. Çĕньял çуменчи 20 гектар йышăнакан лаптăкра кăçал "Белорусская", "Лангедейкер" тата "Зимовка" сортсене лартса ÿстернĕ, тухăç начар мар. Пахча çимĕç цехĕн ертÿçи В.И. Салмина ертсе пыракан рабочисен ушкăнĕ çанталăк пăсăличчен кунти пĕтĕм купăстана йĕркеллĕ пухса кĕртессишĕн тимлет. Реализацилемеллине уйрăм тиесе тÿрех склада хураççĕ, купăста çулçисем вылăх апачĕ валли ăсанаççĕ.**

Г.СЕМЕНОВ фото ÿкерчĕкĕ.

# ЯЛ ВУЛАВĂШĔ - 55 ÇУЛТА

Çак кунсенче районти библиотекарьсен черетлĕ семинарĕ Хăймаласкасси ял вулавăшĕнче иртрĕ. Ку библиотека октябрь уйăхĕнче 55 çул тултарчĕ.



Вулавăша саламлама нумай çын килчĕ: культура управленийĕн ертÿçи М.Я.Павлова, ЦБС директорĕ Е.С.Васильева, библиотекарьсен профком председателĕ С.А.Михайлова, библиотекарьсем, ял администрацийĕн пуçлăхĕ И.Л. Грачев, ял вулавăш активĕнчен Н.Н.Сергеева тата ыттисем те.

Пирĕн ял вулавăшĕ Янăш ял администрацине кĕрекен Янăш ялĕнчен пуçланать. 1949-1950 çулсенче кунта Г.Т.Тихонов, 1950-1955 çулсенче - И.Г. Григорьев ĕçленĕ. Совет çарĕнчен таврăннă Геннадий Тихонович тÿрех ял вулавăшне ĕçлеме кĕрет. Вăл ĕçленĕ чух кунта 2300 яхăн кĕнеке пулнă. Анчах 5 çул ĕçленĕ хыççăн И.Г.Григорьева сельсовет председательне суйланă.

1955 çулхи март уйăхĕнче ял вулавăшне тин çеç 10 класс пĕтернĕ М.С. Сазонова йышăннă. 1965 çулта Янăшран ăна Хăймалакассине куçараççĕ. Кунта вăл 1984 çулччен ĕçлет. Çак çулхине, июнь уйăхĕнче ял вулавăшĕнче пушар тухать. Библиотека тĕппипех çунса каять. М.С.Сазонова кĕнеке фондне тепĕр хут пуçтарма пуçлать. Ытти библиотекăсем те пулăшаççĕ ăна ку ĕçре. Чурачăк ял вулавăшĕ нумай кĕнеке парса хавхалантарать.

1986 çулта ял вулавăшне «Искра» колхоз правленийĕнче пĕр пушă пÿлĕме вырнаçтараççĕ. Манефа Семеновна 38 çул вăй хунă. Халĕ вăл тивĕçлĕ канура.

1993-1999 çулсенче ял вулавăшĕнче Л.А.Семенова ĕçленĕ. 1999 çултан манăн ĕçлеме тÿр килчĕ. Хальхи вăхăтра ял вулавăшĕнче кĕнекесен шучĕ 7 пинрен иртнĕ. Вулакансен шучĕ - 550 çын. Кĕнеке, хаçат-журнал - 11500 экземпляр. Ял вулавăшĕнче экологипе çыхăннă «Çăлкуç» клуб ĕçлет. Вăл хăйĕн планĕпе мероприятисем ирттерет. Çак ĕçе кĕçĕн (1-3) класра вĕренекен ачасем хастар хутшăнаççĕ. Уйрăмах Ирина Семенова, Таня Жучкова, Люда Кудряшова, Даша Мясникова, Юля Бардасова ячĕсене палăртас килет.

Ял библиотекин юбилейĕ питĕ интереслĕ те хаваслă иртрĕ. Çак уява ирттерме «Искра» СХПК ертÿçи Н.П.Мурзаков, Чăрăшкасси шкулĕн директорĕ И.К.Гаврилова, клуб заведующийĕ Е.В. Афанасьева тата Чăрăшкасси ял администрацийĕн ертÿçи И.Л. Грачев пулăшрĕç.

**❂ Çăлкуç» клуб хастарĕсем вулавăшра.**

**Г.ПУЧКОВА, вулавăш ертÿçи.**

❂ Аслă Çĕнтерÿ 60 çул тултарас умĕн

# ÇАВ ÇУЛСЕН ÇУХАЛМĔ ПАРХАТАРĔ

**Вăхăт кĕтсе тăмасть, шав малалла шăвать. Шĕнерпуç ял администрацине кĕрекен Коснар ялĕнчи Николай Евсеевич Евсеев вăрçăпа ĕç ветеранĕшĕн, Хĕрлĕ Çăлтăр, Хисеп Палли орденĕсен кавалерĕшĕн кун-çул юххи уйрăмах сисĕнет. Çитес çулхи августра вăл сакăрвуннă тултарать. Çапла вара унăн пурнăç кĕнеки çÿхе мар: аса илмелли, каласа памалли питĕ нумай.**

## МАЛТАНХИ ТАПХĂРТА

- Ялти ытти ачасем пекех пулнă эпĕ, нимпе те уйрăлса тăман,- тет Николай Евсеевич.- Май çитнĕ таран ĕçленĕ, атте-аннене пулăшнă, пушă вăхăтра выляна-кулнă. Апашри 7 çул вĕренмелли шкула сумка çакса çÿренĕ, ăс-тăн пухса малалла вĕренес ĕмĕтлĕ пулнă. Çавăнпах пулĕ шкул хыççăн Шупашкарти строительство техникумне кĕтĕм. Анчах виççĕмĕш курс хыççăн пăрахма тиврĕ: килте пилĕк ача, вĕсене пăхас пулать. Вара хуларан яла таврăнтăм, хамăрăн "Кормилец" колхозра плугарьте ĕçлерĕм.

Вăрçă пуçланнă кун халĕ те асран тухмасть. Вырсарни кунччĕ. Эпĕ ун чух вунулттăра кăна. Ванькка шăллăм урамран кĕчĕ те: "Пичче, ял-йыш вăрçă пуçланни çинчен калаçать, ăна-кăна никам та лайăх пĕлмест. Эсĕ часах хулана лавпа каятăн, пĕлсе кил-ха",- тет. Чăн та, çав кун лаша кÿлсе Шупашкара колхоз хăярне леçмеллеччĕ. Унта çитсен тин пирĕн Тăван çĕршыв çине нимĕç фашисчĕсем тапăнса кĕни çинчен илтрĕм.

Çав çулхи ноябрĕн 4-мĕшĕнче тăшман самолечĕ Шупашкар çине бомба пăрахнине те манас çук. Эпир каçхи сменăраччĕ. Çутă сÿнсе ларчĕ, "Тревога" сигнал янăраса кайрĕ, çĕре чĕтретсе темиçе бомба çурăлчĕ. Учительсем пире пĕрерĕн класран илсе тухаççĕ. Анчах та çамрăксемшĕн бомба çурăлни питĕ интереслĕ пулнă, хăрама та пĕлеймен пуль. Шăв-шав лăплансан Калинин урамĕнчен Зеленăй пасар енне чупрăмăр. Чебоксарка шывĕ хĕррипчи халăх сучĕн çуртĕ çине пĕр бомба ÿкнĕ, тепри кăшт аяккарах. Почта çуртне тĕп тăвасшăн пулнă-ши çав нимĕç летчикĕ - пĕлес çук. Курма пуçтарăнса тулнисене милиционерсем тата çар çыннисем кăшкăрса салатса ячĕç.

## ВĂРÇĂРА

1943 çулхи январь пуçламăшĕнче мана салтака илчĕç. Ун чух атте те Хĕрлĕ Çар ретĕнче пулнă. Анне мана килтен вĕри куççульпе ăсатрĕ. Çав кун ялтан эпир иккĕн тухса кайрăмăр, Леонид Ионовпа пĕрле. Шел, юлташăм вăрçă хирĕнчен яла таврăнаймарĕ, Курск таврашĕнче пуç хунă терĕç.

Малтан пире пуйăспа Хусана илсе кайрĕç, вĕренÿ полкне лекрĕмĕр. Столбищенски районĕнче Ионовпа уйрăлма тиврĕ: эпĕ автоматчиксен ротине юлтăм, вăл - танксене хирĕç кĕрешекен полка.

Вĕренсе пĕтернĕ хыççăн мана сержант звани парса 1943 çулхи августра фронта ячĕç. Ун чух эпĕ шăпах вун саккăр тултарнăччĕ.

...Пуйăс ураписем шăлтăртăк-шăлтăртăк тăваççĕ. Чÿречерен пăхсан тем анлăш Раççей çĕршывĕн уйĕсемпе вăрманĕсем, çаранĕсемпе юхан шывĕсем, хулисемпе ялĕсем хыçа юлаççĕ. "Тăшманпа хăш çĕрте çапăçма тивĕ-ши пире?" текен шухăш кашни салтакăн канăç памасть. Хирĕç килекен эшелонсенче аманса пĕтнĕ, пуçне е алли-урине шурă бинт чĕркенĕ, патак тытнă салтаксене курсан чĕре тунсăхлать. Тепĕр чух манран çапла ыйтаççĕ: «Фронта лексен хăранă-и эсĕ?» теççĕ. Мĕн суймалли унта - хăранă та, шикленнĕ те. Ирсĕр тăшманпа çапăçасси вăл алла çава тытса курăк çуласси мар-çке.

**Г.ЕГОРОВ калаçнă.**

**(Малалли пулать.)**

# АТĂЛ ХУМĔСЕМ

литература кăларăмĕ

## ЫР УТĂН ХУÇИ ПĔРРЕ

- Каçхине çапкаланса çӳренĕрен, аллуна ача тытса курмалла ан пултăр санăн,- тесе вăрçнă пĕррехинче Ярми старик хăйĕн Йăван ятлă пĕртенпĕр ывăлне. Çаплах пулнă та вара Йăванăн пурнăçĕ... Каçсерен Йăван хĕрсене мар, лашасенчен чи лайăххисене суйласа вăрланă, сутнă. Хăйĕн килĕнче те лашасем пулнă. Ярми старик вилсен ывăлĕ пĕр лашине кăна хăварнă. Пĕррехинче вăл килне аваннисенчен пĕрне аякран вăрласа килнĕ, ăна пытарма та ĕлкĕрнĕ. Лашан хуçисем йĕрлесех Ярми Йăванĕ килĕ умĕнче чарăннă, лашана каялла тавăрма каланă.



А.КУШНИКОВ фото ӳкерчĕкĕ.

- Шырăр,- тенĕ кăна Йăван.

Таçта та пăхса çаврăннă хуçисем, лашана тупайман, канас шутпа сарайĕнчи каска çине ларнă.

- Кунта-çке-ха лашан йĕрĕ çухалать, ăçта пулма пултарать тата?- тесе калаçкаланă вĕсем. Çав хушăра çӳлтен шыв юхма тытăннă. Шăршĕ-тĕсĕнчен ку шĕвек каяш пулнине пĕлнĕ. Лашана вăрă аслăк тăрне хăпартса янине ăнланнă. Тупма пулăшать вара лаша хăйĕн чăн хуçине.

## ЧИ ХĂВĂРТ ЧУПАКАН УРХАМАХ

Хăйĕн лашипех Ярми Йăванĕ пасартан ытлашши тыррине сутса таврăннă. Вăхăт каç еннелле сулăннă. Сасартăк Йăван хыçаларах лаша хартлатнине илтнĕ, вăрă-хурах тесе вăл лашине хăвăртрах хăвалама тытăннă. Тепĕртакран та итленĕ лавçă, каллех лаша тулхăрнăн туйăннă ăна. Вара тата хытăрах хăваланă лашине, çапла вăл хăйсен ялĕ çывăхĕнчи Каскулай çырми патнех çитсе тăнă, ансах итлесе пăхнă: çук-и хăвалакан?

- Никам та çук! Укçи-тенки хăямата-ха. Эпĕ тĕрĕслерĕм: нивушлĕ ман лашаран хытă чупаканни татах та пур? Çук. Манăн урхамахăмах чи хăвăртти,- калаçнă вăл хăйĕн лашипе.

Пĕлнех ĕнтĕ лашасем сутса курнăскер чи ăратли, чи хăвăрт чупаканни хăшне.

**М.ТИНЕСПИ.**

**«Машка» - ман юратнă лаша.**

## КĂМĂЛ-ТУЙĂМ КĔВВИСЕМ

**Пĕрле вĕреннĕ тусăмсем,**
**Пĕр кайрăр та, килмерĕр урăх.**
**Ялан асрах манми сăнсем,**
**Хăвăра çеç хăçан-ха курăп?**

**Инçе пулин, манми туссем,**
**Эсир мана чунра чи çывăх.**
**Килме çуках-ши вăхăтсем?**
**Аса илсе çыру хăть çырăр.**

* * *

**Сар хĕрсене тиркев тусах**
**Паян кунччен те авланмарăн.**
**Ĕнтĕ ялта эс ват хусах,**
**Мĕн-ма тупмарăн савнă арăм?**

**Ялти ят-сумлă каччăна**
**Ниушлĕ мăшăр тупăнмарĕ?**
**Кун пек пулсассăн халь чăнах**
**Сӳнсе ларать ыр йăх тымарĕ...**

* * *

**Ыр кăмăлпа килекене**
**Чупса тухсах эп уçăп алăк.**
**Савса лартса кĕрекене**
**Пыл-сăрапа ăна хăналăп.**

**Сив шухăшпа çӳрекене**
**Аякранах туйса эп курăп.**
**Алăка мар, чӳречене**
**Ăна курсан хупса çеç хурăп.**

**Кĕçтук МИШШИ,**
**Юртукасси ялĕ.**

## ВАТĂ ХУСАХ ПУРНĂÇĔ

Манăн атте-анне çук,
Сĕре кĕнĕ вăхăтсăр.
Пичче, аппа, йăмăксем -
Хăйсем йăва çаврăнă.

Çамрăк чухне мана та
Юратнă пуль хĕрсем,
Анчах темшĕн вĕсене
Ыталаса чуп туман.

Авланса курман нихăçан.
Халь пурăнатăп пĕр-пĕччен.
Ӳкĕнес килет хăш чухне
Пĕччен тăрса юлнишĕн.

Вăй пур чухне туймарăм,
Хама валли кил-çурт турăм,
Анчах кичем пурăнма
Хам хăпартнă кил-çуртра.

Иртсе кайнă ĕмĕре
Тавăраймăн нихăçан.
Пĕччен пурнăç пит кичем,
Вăрçăнма та çын кирлĕ.

**М.АНДРИЯНОВ,**
**Паçпак ялĕ.**

### Сăвă сĕвемĕ

**Хăлха йӳçет - налук, налук, налук...**
**Епле ăна ылмаштармашкăн çук?**
**Тен, илтĕнет сире вăл кулнă май -**
**Асаттесен сăмахĕ - куланай.**

* * *

**Малтан çĕрне, унтан лашисене**
**Туртса илсе “тăн кĕртрĕç» хресчене.**
**Тархасласа халь çĕр сĕнет тӳре -**
**Тухасшăн халăх умĕнче тӳрре.**

**Пĕр чăнлăха вăл темшĕн ăнланмасть:**
**Кăкланă йывăç çулçă кăлармасть.**
**Танмарлăх пур: эп - чухăн, вăл - пуян.**
**Çитменлĕх пур: вăл - самăр, эп - ырхан.**
**“Пит ан кулян,- тет шухăш,- çав-çавах**
**Танлаштарать пурне те пĕр çăвах”.**

**Павел ВАСИЛЬЕВ,**
**Толик Хураски ялĕ.**

## ЭХ, КУММАÇĂМ, КУММА!

Ырă чунлă ыр кумма,
Килсе лар-ха ман çумма.
Савăк юрă шăратар,
Пĕр-пĕрне телей сунар.

Çакă çутă тĕнчере,
Пурăнатпăр-çке пĕрре.
Икçĕр çулĕ кирлĕ мар-
Çĕр çулпалах çырлахар.

Хитререн те эс хитре
Çак тулли кĕрекере.
Юрлама та эс маттур,
Ташăра та пит сатур.

Пит чипер хитре кулан,
Тĕнчене илем паран.
Çепĕç, савăк пулнăран,
Ман чуна та çунтаран.

Çурхи ырă вăхăтра
Шăратар пĕрле юрра.
Вăй-хал патăн пурăнма,
Çепĕç чунлă ыр кумма!

Тыт тăванăм черккине -
Ĕçер туслăх эрехне!
Эх, куммаçăм, эх кумма,
Çунат патăн пурăнма!

## СЫВĂ ПУЛ, САВНИÇĔМ...

Сыв пул, савниçĕм, сывă пул,
Ик куçăмра тулли куççуль.
Ак уйрăлать-çке пирĕн çул,
Чун лăпланмалăх алă сул.

Çук килеймерĕ ырă кун,
Тен çавăнпах хурланчĕ чун.
Нуша тени умра тем чуль,
Сыв пул, савниçĕм, сывă пул.

Часах çитет-çке уйрăлу,
Епле ачашчĕ сан аллу.
Савниçĕм, тек манран ан кул,
Сыв пул, савниçĕм, сывă пул.

Ак çул юппи умра выртать.
Куççульсĕр чун ман макăрать.
Турри памарĕ ыр кун-çул -
Сыв пул, савниçĕм, сывă пул...

## ПĔТСЕХ ПАЯН ПĔТЕТĔП

Паян ман мухмăр. Эпĕ питĕ чирлĕ,
Шавлать, кашлать ман пуçăм иртенпе.
Эй, юлташсем! Кăштах-çке эсир тӳсĕр,
Часах чĕртетпĕр мухмăр эрехпе.

Эрех ĕçсен чуна та питĕ çăмăл,
Манатăн хуйхă, тунсăх таврашне.
Çут çулăмпа тулать-çке манăн кăмăл,
Татах мĕн кирлĕ мĕскĕн чăвашне?

Сана, савни, манас тесех ĕçетĕп,
Çут туйăма путарăп эрехре.
Пĕтес тесех паян-çке эп пĕтетĕп,
Çак юрату пĕтмест-çке чĕрере.

Çут стакана хуллен çӳле çĕклетĕп,
Эп икçĕр çул, паллах, пурнассăм çук.
Эх, савнă тус! Пĕр саншăн çеç пĕтетĕп,
Ĕçес эппин умра эрех пур чух.

Поэт чĕри çунса паян кĕл пулчĕ,
Сӳнтертĕн, тусăм, эс ыр тĕлĕке.
Эй, алкашсем! Тен сирĕн кăмăл тулчĕ,
Эп сиршĕн сутрăм хамăн çĕлĕке.

Çук, шанчăка хамра эп сӳнтерместĕп,
Эрех тек ĕçмĕп. Пулмĕ çухату.
Савни, савни! Сана çеç ĕненетĕп,
Эс ман телейĕм, пурнăç, юрату.

## АЧА КУЛЛИ



Г.СЕМЕНОВ фото ӳкерчĕкĕ.

**Телейлĕ кун. Алла ача илетĕп.**
**Кулса выртать умра ак пĕчĕк чун.**
**Сана савса телей чунтан пиллетĕп,**
**Йăл кулăпа пуçлантăр санăн кун.**

**Аннӳ пекех чипер илемлĕ пултăн,**
**Ашу пекех хĕрӳллĕ те хастар,**
**Тен, çавăнпах ачашшăн эсĕ култăн**
**Тен, çавăнпах чунра ман пархатар.**

**Ав асаннӳ телейлĕн шав кулать те,**
**Сан куллу пек илемлĕ ун кулли.**
**Шав ыталать. Сăвап сана сунать те,**
**Пиллев парать сана ачаш алли.**

**Ача кулли çап-çутă çăлтăр евĕр,**
**Ача кулли хĕвел пекех çиçет.**
**Çут кулăпах иртсемччĕ санăн ĕмĕр**
**Сан куллупа поэтăн чун вĕçет.**

**Телей сана эпир чунтан сунатпăр,**
**Утас çулу чипер те сан таса.**
**Пурнăçра телейшĕн çуралатпăр,**
**Телей сунатпăр халь сана савса.**

**Владислав ЯРДЫКОВ пуххинчен.**

## САР КАЙĂК ЮРРИ

*Юратнă çыннăма халаллатăп*

Тĕнче хĕрне вĕçсе тарас килет
Пур усалтан, пур тасамарлăхран.
Сап-сар чечек тĕнчи çӳле чĕнет,
Каллех йыхрать çут сасă аякран.

Ман сăввăмсем, сар кайăк юррисем -
Чун ылтăнĕ, ахахĕ, эсир, манăн,
Вĕри вутри куççуль, суранăн ыррисем,
Эсир килетĕр те кĕçех каятăр...

...Эп - кайăк, читлĕхри сап-сарă кайăк,
Ик чĕппĕм, мăшăрăм çумра...
Çунат сарса вĕçесчĕ ирĕк, савăк...
Пур чун хавалĕпе тăсасчĕ юррăма.

...Тĕнче хĕрне вĕçсе курас килет
Сап-сар хĕвелĕн ылтăн шевли пек
Эс пуррине туйсан мана çитет -
Эс ман суран та сиплĕх чĕрене.

**Ю.ПЕТРОВА,**
**Кăшавăш шкулĕ.**

### Кăштах кулăш

## ÇĔР УЛМИ ЛАРТМАН

- Кăçал çĕр улми тухăçĕ савăнтарчĕ пулĕ-ха?
- Лартман эпир ăна.
- Мĕншĕн?
- Колорада нăррисем вилсе пĕтчĕр терĕмĕр.

## САНĂН МĂШĂРУ

Верук: Авă икĕ ӳсĕр сулланса килеççĕ, пĕри сан упăшку курăнать.

Лисук: Манăн ĕçкелесен çанă тавăрать, ку санăн Çтаппан курăнать, хăрах пушмакпа.

## ВИЛСЕХ КАЙМĔ-ХА

Иртен-çӳрен: Ку этем йăванса каймаллах ĕçнĕ курăнать эрехне, вилсе ан кайтăр.

Милиционер: Вилсех каймĕ-ха, эрех лавкки еннеллех пăхса выртать.

**П.ФЕДОТОВ пухнă.**

**Страницăна Г.ЕГОРОВ хатĕрленĕ.**

Галина ЦВЕТКОВА

# ÇӲППИ

Калав

Çӳппи хăрах кĕтессинчен каталнă пурттине урай хăми хушшине хирĕнтерсе кĕртрĕ те мĕнпур вăйран хайăрма пикенчĕ. Хуçисене утмăл çул юп кăтартнă хăма парăнасшăн пулмарĕ анă, ĕлĕкхи çирĕп пăтасемпе çапса лартнăскер, вырăнтан та хускалмарĕ.

Юман-и ку сирн урай,

Чăрăш-и ку сирн урай?

Эпир ташша тухсассăн,

Чăтать-и ку сирн урай?-

Хăй сисмесĕрех юрласа ячĕ Çӳппи, юлашки йĕркине юрланă чухне пăчăртанса тухнă куççульне сăранланса ларнă кĕпе аркипе шăлса. Кĕпе тенĕрен туллиех-ха вĕсем ватă хĕрарăмăн, ав, кăмака хыçĕнче купаланса выртаççĕ. Симĕс çитсă кĕпине урам урлă пурăнакан Урине вĕтĕрех панăччĕ, амăшĕ чире пула вăхăтсăр çĕре кĕрсен, Хурине - Çăрахвинĕн кинĕ, тепĕр куçлăкуçлă хурипе хĕрли - кӳршĕри висĕм çул çĕре кĕнĕ Татюк карчăкăн, тĕртнисем - уксах Сăпанин. Камăн кĕпи кăна çукка пулĕ унта... Çывăх кассенче пурăнакансем манмаççĕ Çӳппие. Ватăлса е сарăмсăр вилнĕ карчăк-кĕрчĕк кĕпи-йĕмне ытамĕ-ытамĕпе йăттарса яракансем те çук мар ку чух. Ĕлĕкрех хальхи пек ырлăх çукчĕ. Ĕлĕкхи пурнăç хальхи пек тăнăç тăнă пулсан, Çӳппи, тен, качча каятчĕ... Хĕрарăмăн куçĕ умне кăтра çырă çӳçлĕ, çĕмĕрт евĕр хура куçлă, яштака Петĕр сăнарĕ тухса тăчĕ.

Тулта асар-писер çилтăман алхасать. Витĕрех шăнса пăрланнă кантăксем витĕр урамра мĕн пулса иртни курăнмасть. Хапха хămисене сӳтсе-ваклаcа çунтарса пĕтернĕренпе висĕ кун иртрĕ. Висĕ кун кăмакара чуна ăшăтакан вутă шатăртатса çунманни, висĕ кун ăша вĕри апат яманни.

- Таруха мĕн, вилнĕ çыннăн вут хутса ăшăнас хуйхи çук,- сасăпах уласа ячĕ Çӳппи. - Пăрахса хăва-а-арчĕ мана, пĕчченех пăрахса хăварчĕ.

Чунĕ тăвăлса килнĕ хĕрарăм урай хăмине шелсĕр хайăрма тапратрĕ. Колхоз йĕтемĕнче висĕ пăтлă фураж миххисене çурăм çине çын пулăшмасăрах çавăрса хураканскер, парăнтарчех ĕмĕрхи урай хăмине. Чуна çӳçентермелле чĕриклетсе, çăра тусан кăларса месерле çаврăнса выртрĕ хăйĕн ĕмĕрĕнче хальхи сăнсăр хуçи пекех темĕн те пĕр тӳссе ирттернĕ, сăрă лексе курман сарлака та çирĕп хыр хăма.

- Шак-шак-шак!- илтĕнчĕ урам енчи чӳречерен.- Çӳппи! Чĕрех-и эс?!- илтĕнчĕ çав самантрах бригадирăн хăрăлтатса тухакан хулăн сасси.

- Чĕрех-чĕрех!- пăлханса ӳкрĕ хĕрарăм, çын сассине илтнипе пĕрре хĕпĕртесе, тепре хăраса. - Ĕçе ăçта каймалла?

- Фураж турттарма!- хуравларĕç тул енчен.- Эсĕ пӳртӳ умĕнчи юра хырса тасат-ха, çӳре кунта ман пĕç тĕп таран кĕрт тăрăх ашса,- тесе мăкăртаткаларĕ те бригадир, юра чĕриклетерсе утакан ура сассисем урам урлă каçса кайса илтĕнми пулчĕç.

(Малалли пулать.)

## Юбилей ячĕпе

Иккасси ялĕнче пурăнакан Александр Михайлович МИХАЙЛОВА 70 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Вăрăм ĕмĕр, ырлăх-сывлăх, тулăх пурнăçпа телей сунатпăр.

Иккасси ял администрацийĕпе шкул коллективĕсем, ветерансен совечĕ.

## ТЕЛЕЕ ТĂССА

*А.М.Михайлов тренера халаллатăп*

Телей çулĕ
Тĕрлĕ тĕслĕн
Уçĕ шкулăн хапхине.
- Пулсам ăслă,
Эс сăпайлă,-
Сунчĕ ман вĕрентекен.
Утăм хыççăн
Утăм турăм.
Кĕтĕм пĕр ир спортзала.

Кунта чупрăм,
Çынна куртăм -
Чĕнчĕ вăл мана старта.
- Телей пур сан,
Ăс пухатăн...
Спортра туслă пул - ялан!-
Пит ăш пиллĕн
Вăл калачĕ,
А.Михайлов тренер ман.

**М.ТИНЕСПИ.**

## ВАСКАТĂП

*Кил хушшинчи*
*шурă хурĕ*
*Почта уйрăмне*
*васкать.*
*«Тăван Енсĕр»*
*юлас марччĕ -*
*Çак ăна*
*хумхантарать.*



А.КУШНИКОВ фото ӳкерчĕкĕ.

## ❂ Япăх хыпарсем

### Ах, аннеçĕм, анне!

Шорчекассинче нумаях пулмасть пулса иртнĕ ĕç те синкерлĕхпе тĕлĕнтерет. Кунта амăшĕ патне канмалли кунсенче Кӳкеçре пурăнакан ывăлĕ пырса çӳренĕ. Ăна кăна пулăшкалама ĕнтĕ. Анчах та çав вăхăтрах иккĕшĕ те сыпкалама юратнă. Ку хутĕнче те тискерлĕхĕн тĕп сăлтавĕ - хамăр пурăнма пĕлменни, эрех ĕçсе çын ретĕнчен тухни. Чышкă тытăмĕ хăйĕн ĕçнех тунă. Ывăлĕ хаярланса тулса çитнĕ кăмăлне лăплантарайман, амăшĕн пурнăçне татнă.

### Тутаркассисем мĕнпе çылăха кĕнĕ?

Каççерен çула тухакан «Шырав» ушкăн сотрудникĕсем çак кунсенче «Атлашевский» ял хуçалăх кооперативĕн уйне тапăннă икĕ уралла вăрăсенчен ывăнсах çитрĕç пулас. Çывăхри Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакансемпе варăнти наянсем хуçалăхра вăй хуракансем çу каçипе тар юхтарса ӳстернĕ пахча çимĕçе иленнĕ. Кукăр алăллисем хушшинче 17 çулхи çамрăкран пуçласа 78 çулхи кинемей таранах пур.

Сăмахран, иртнĕ эрнере çеç милици сотрудникĕсем, каçхи сунара тухнă вуншар çынна тытса чарнă. Вĕсен шутĕнче - хĕрлĕ кăшман кăларса йăтнă 72 çулхи кинеми те. Çакна та палăртмалла, хĕле ют çимĕçпе кĕтсе илме хатĕрленекенсенчен ытларахăшĕ аллă-утмăл çулхи хĕрарăмсемпе арçынсем. Вăт çапла тĕслĕх кăтартатпăр эпир хамăр ачасене.

**П.ПАВЛОВ.**

## ❂ Юбилей

# САЛАМЛАСА ТА МУХТАСА

**Степанида Андреевна Андреева (Спани) октябрĕн 20-мĕшĕнче 95 çула çитрĕ. Вăл 1909 çулхи октябрĕн 20-мĕшĕнче Шупашкар уесне кĕрекен Шăмăш ялĕнче çуралнă. Мĕн курман пулĕ, мĕн тӳссе ирттермен пулĕ вăл хăйĕн вăрăм ĕмĕрĕнче!**

**Малтан Иван Михайлович (унăн мăшăрĕ) фронтра пуçне хучĕ. 3 ачине вăл пĕччен пăхса çитĕнтерчĕ, çав вăхăтрах колхоз ĕçĕнчен пĕрре те юлмарĕ, фермăра та тăрăшрĕ. Мĕн чухлĕ вĕри куççуль юхтарман пулĕ вăл!**

**95 çул. Спани аппа, сана ачусем, мăнукусем, унăн ачисем, шăллупа йăмăку ырлăх-сывлăх, килте лăпкă, телейлĕ çĕр çул пурăнма сĕнеççĕ.**

Мĕнле шухăшсем шырам-ши?
Епле сăмахсем тупам-ши?
Сана, аппа, саламласа
Çуралнă кунупа хавхаланса.

Аппа, çитрĕ çуралнă кун,
Анчах сисет-ши санăн чун
Мĕнле пурнăç йывăр пулнине,
Мĕнле ăна эс чăтнине?

Паллах, телей курнă вăрçăччен,
Йысна фронта тухса кайиччен,
Ача-пăча сывă ӳснĕ чухне
Ӳт-пӳре вăй тапса тăнă чухне.

Йысна килеймерĕ вăрçăран,
Çамрăк пуçне хучĕ вăл фронтра-
Ку пулчĕ пит хурлăхлă хыпар,
Мĕнле эпир ăна чăтас?

Темле пысăк хуйăх пулсан та,
Пуçа усса эсĕ ларман.
Ачасем пит çамрăк юлсан та,
Çемье ӳстернĕ, салатман.

Сан пурте ачусем çемьеллĕ,
Мăнуксем те пурте килнĕ.
Вĕсен ачисем те сывă ӳсеççĕ,
Çын пулмашкăн вĕренеççĕ.

Аппа, апла пулсан упра хăвна,
Эсир те Витя, Серафима, Саня,
Ан манăр аннĕре пăхма
Аппан сывлăхне упрама.

Аппа, хаоь сывă пул, сывă пул та
Аван юл, чирĕ-чĕрĕ ан пултăр,
Малалла та ăнса пурнăç пытăр,
Çĕр çула та çитме сывлăх пултăр.

Ун чухлĕ пурăнма Турă вăй патăр.
Аппа, сана саламласа та мухтаса,
Çыратпăр эпир пурте юратса,
Йăмăку, кинӳ, шăллу тата ытти тăвану.

**Г.ДАНИЛОВ.**

## ❂ Спорт

# АПАШ КĔРЕШӲÇИСЕН ÇИТĔНĔВĔ

Кăçалхи октябрĕн 15-17-мĕшĕсенче Шупашкарта ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен республикăри уçă ăмăртăвĕ иртнĕ, унта 1990-1992 çулсенче çуралнă çамрăк спортсменкăсем вăй виçнĕ.

Ăмăртăва хамăр республикăри хуласемпе районсенчен çеç мар - Удмурт Республикинчен, Мускав, Свердловск, Ульяновск облаçĕсенчен, Пермьрен, Хусанран, Нефтекамскран чи вăйлă кĕрешӳçĕсем хутшăннă.

Пирĕн район чысне Апашри вăтам шкулта вĕренекен хĕрсем хӳтĕленĕ. Иосиф Соловьев тата Виталий Смородинов тренерсен воспитанницисем çак çивĕч ăмăртура палăрмалла çитĕнӳ тума пултарнă. Тăххăрмĕш “б” класри Екатерина Осипова 57 килограма çити виçере иккĕмĕш вырăна тухнă. 9-а класра вĕренекен Людмила Саржанпа 7-а класри Лилия Арефьева хăйсен виçе ушкăнĕсенче иккĕшĕ те тăваттăмĕш вырăн йышăннă. Екатерина Леонтьева кĕрешӳçĕ пиллĕкмĕш вырăнта.

Екатерина Осипована, Людмила Саржана тата Лилия Арефьевана ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен Чăваш Республикин пĕрлештернĕ командин йышне кĕртнĕ.

**В.ГАВРИЛОВ.**

## ÇАК КУНСЕНЧЕ ÇАКĂН ПЕК ÇАНТАЛĂК ПУЛАТЬ



| Юн кун 20 окт. | Кĕçнерни кун 21 окт. | Эрне кун 22 окт. | Шăмат кун 23 окт. | Вырсарни кун 24 окт. |
|---|---|---|---|---|
| çумăр çума пултарать, +2... +7 | пĕлĕтлĕ тăрать, çумăр, +4... +6 | улшăнса тăракан санталăк, çумăр çумасть, +2... +4 | пĕлĕтлĕ, çумăр, +6... +11 | пĕлĕтлĕ, çумăр, +7... +12 |

**По вопросам ПРИВИВКИ против гриппа обращаться к участковому терапевту, участковому педиатру или в 38 кабинет поликлиники.**

**По всем неясным вопросам обращаться к зам. главного врача по амбулаторно-поликлинической помощи в 20 кабинет.**


В соответствии со статьей 31 Земельного кодекса Российской Федерации желающим предоставляется в долгосрочную аренду земельный участок площадью 0,08 га, расположенный в с.Ишлеи, по ул.Советская, рядом с магазином «Стройхозтовары», под строительство Ишлейского газового участка по сервисному обслуживанию и эксплуатации газового оборудования.

В соответствии со ст. 31 ЗК РФ желающим предоставляется в долгосрочную аренду земельный участок площадью 0,0150 га, расположенный в пос.Кугеси по ул.Шоршелская, западнее магазина «Стройхозтовары» Кугесьского райпо, для установки металлической башни сотовой связи.

Победителем открытого аукциона от 14.10.2004 года по продаже в собственность земельного участка площадью 0,0820 га является Ильин Валерий Александрович. Цена установленная торгами 2943 рубля.

Управление образования администрации Чебоксарского района объявляет открытые торги на текущий ремонт помещения муниципального учреждения дополнительного образования «Детско-юношеская спортивная школа».

Торги состоятся 3 декабря 2004 года в зале администрации Чебоксарского района.

За дополнительной информацией обращаться в управление образования администрации Чебоксарского района в кабинет № 40 (тел.: 2-14-82).

Хĕрлĕ-шурă тĕслĕ 5 уйăхри пăру сутатăп. Т.: 2-34-62.

Пăру сутатăп. Т.: 2-42-80.

Продаю шифер, цемент, рубероид, керамблоки, колодезные кольца диам. 1,0. Возможна доставка, без выходных. Тел.: 31-5-27 (Ишлеи).

Продаю шифер, цемент, сруб, мох, керамблок с доставкой и без выходных (Ишлеи). Тел.: 3-15-85.

Продаю пиломатериал любой и на заказ, доставка, отходы пиломатериалов, дешево. Тел.: 2-38-66, 8-903-389-14-00.

Продаю керамблоки с доставкой. Телефоны: 8-903-345-05-56, 2-14-75, 2-50-37.


❂ ❂ ❂

МУЗ «Чебоксарская центральная районная больница» выражает глубокое соболезнование врачу-эндокринологу Николаевой Ираиде Алексеевне в связи со скоропостижной смертью матери

**Нины Игнатьевны ЗАХАРОВОЙ.**


ВрИО гл.редактора А.А.ПЕТРОВА

ТĂВАН ЕН
(“КРАЙ РОДНОЙ”)
Чебоксарская районная газета

Учредители:
ГУП “Кугесьский издательский дом”, Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики

Газета зарегистрирована в Приволжском окружном межрегиональном территориальном управлении МПТР РФ 17 декабря 2002 г. ПИ №18-1109

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор - 2-12-61, ответственный секретарь, фотокорреспондент - 2-13-80, отдел сельского хозяйства - 2-21-88, компьютерный отдел - 2-12-59, отдел писем - 2-21-88, бухгалтерия - 2-12-66. E-mail: gazeta@chebs.cap.ru

Номер набран, сверстан и отпечатан в ГУП “КуИД”. Тел.Ёфакс: (8240) 2-13-83. E-mail: prinĕ@chebs.cap.ru

Дежурный по номеру: И.В.Васильева

Печать офсетная. Объем 1,0 печ. лист. Номер подписан в печать: 19.10.2004 г. в 16 час. 00 мин. Заказ № 1693. Тираж 1660. Индекс газеты - 54820.